26-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
26
ВЫРСАРНИКУН
192(6429) №

Чăваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

Хӗвеланăç фрончӗн çарӗсем, малалла ăнăçлăн наступлени туса пырса, **Днепр** шывӗ урлă каçнă та вăйлă çапăçусем хыççăн паян, сентябрӗн 25-мӗшӗнче, пысăк область центрне—Смоленск хулине,—нимӗçсен Хӗвеланăç енчи оборонин чи кирлӗ стратегиллӗ узелне штурмласа тытса илнӗ.

Паянах Хӗвеланăç фрончӗн çарӗсем, икӗ кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн, тăшман хирӗç тăнине çӗмӗрсе, операцисем тӗлӗшпе питех те кирлӗ пулса тăракан çулйӗрсен узелне тата нимӗçсен Могилев енчи оборонин тӗреклетнӗ хăватлă пунктне—**Рославль** хулине тытса илнӗ.

Смоленскпа Рославль хулисене ирӗке кăларассишӗн пынă çапăçусенче **Глуздовский** генерал-лейтенантăн, **Крылов** генерал-лейтенантăн, **Поленов** генерал-лейтенантăн, **Гордов** генерал-полковникăн, **Сухомлин** генерал-лейтенантăн, **Журавлев** генерал-лейтенантăн, **Попов** генерал-лейтенантăн, **Гришин** генерал-лейтенантăн çарӗсем, авиаци генерал-лейтенанчӗн **Громовăн** тата авиаци маршалӗн **Головановăн** летчикӗсем чапа тухнă.

Уйрăмах тата çаксем чапа тухнă:

Берестов полковникăн 331-мӗш Хӗрлӗ Ялавлă стрелковăй дивизийӗ, **Иовлев** генерал-майорăн 215-мӗш стрелковăй дивизийӗ, **Казишвили** полковникăн 133-мӗш стрелковăй дивизийӗ, **Грызлов** генерал-майорăн 222-мӗш стрелковăй дивизийӗ, **Моисеевский** полковникăн 312-мӗш стрелковăй дивизийӗ, **Кононенко** полковникăн 199-мӗш стрелковăй дивизийӗ, **Колабутин** полковникăн 56-мӗш гвардейски стрелковăй дивизийӗ, **Мультан** генерал-майорăн 42-мӗш стрелковăй дивизийӗ, **Краснов** полковникăн 153-мӗш стрелковăй дивизийӗ, **Колюжный** полковникăн 32-мӗш кавалери дивизийӗ, артиллери генерал-майорӗн **Кожуховăн** 4-мӗш гвардейски тупăллă артиллери дивизийӗ, авиаци генерал-майорӗн **Степичевăн** 2-мӗш штурмовой авиаци корпусӗ, **Андреев** полковникăн 3-мӗш гвардейски бомбардировăчнăй авиаци дивизийӗ, авиаци генерал-майорӗн **Захаровăн** 303-мӗш истребительнăй авиаци дивизийӗ, **Вусс** подполковникăн 309-мӗш истребительнăй авиаци дивизийӗ, **Савенков** майорăн 367-мӗш уйрăм пулеметпа артиллери батальонӗ, **Сергеев** полковникăн 392-мӗш Красноярски корпусной артиллери полкӗ, **Кривошапов** полковникăн 644-мӗш тупăллă артиллери полкӗ, **Бильдин** подполковникăн 873-мӗш истребительнăй противотанковăй артиллери полкӗ, **Сотсков** подполковникăн 549-мӗш минометнăй полкӗ, **Копнин** подполковникăн 317-мӗш гвардейски минометнăй полкӗ, **Боговеев** майорăн 201-мӗш уйрăм гвардейски минометнăй дивизионӗ, **Богородский** майорăн 35-мӗш уйрăм гвардейски минометнăй дивизинонӗ, **Каминский** полковникăн 49-мӗш зенитнăй артиллери дивизийӗ, **Хилько** подполковникăн 341-мӗш зенитнăй артиллери полкӗ, **Семенов** подполковникăн 1478-мӗш зенитнăй артиллери полкӗ, **Котов** полковникăн 42-мӗш гвардейски танковăй бригади, **Крутий** подполковникăн 153-мӗш танковăй бригади, **Савченко** полковникăн 4-мӗш гвардейски танковăй бригади, **Петров** полковникăн 1-мӗш штурмовой комсомольски инженернăй бригади, **Басов** полковникăн 1-мӗш гвардейски истребительнăй противотанковăй артиллери бригади, **Мухин** генерал-майорăн 247-мӗш стрелковăй дивизийӗ, **Кириллов** полковникăн 139-мӗш стрелковăй дивизийӗ, **Гусев** полковникăн 326-мӗш стрелковăй дивизийӗ, **Чижов** генерал-майорăн 49-мӗш стрелковăй дивизийӗ, **Гладышев** генерал-майорăн 277-мӗш стрелковăй дивизийӗ, **Страхов** полковникăн 344-мӗш стрелковăй дивизийӗ, **Чижиков** полковникăн 231-мӗш штурмовой авиаци дивизийӗ, **Гусев** подполковникăн 564-мӗш тупăллă артиллери полкӗ, **Чвыков** подполковникăн 447-мӗш Хӗрлӗ ялавлă тупăллă артиллери полкӗ, **Радченко** подполковникăн 542-мӗш миноментнăй полкӗ, **Пупков** подполковникăн 992-мӗш истребительнăй противотанковăй артиллери полкӗ, **Гусев** майорăн 345-мӗш инженернăй батальонӗ, **Петухов** капитанăн 303-мӗш инженернăй батальонӗ, **Синицин** майорăн 306-мӗш инженернăй батальонӗ, **Сазанов** майорăн 1268-мӗш зенитнăй артиллери полкӗ, **Лавринович** майорăн 54-мӗш гвардейски минометнăй полкӗ, **Еремин** майорăн 2-мӗш уйрăм гвардейски минометнăй дивизионӗ, авиаци генерал-майорӗн **Дрянинăн** 36-мӗш инçене вӗçекен авиаци дивизийӗ, **Балашов** полковникăн 2-мӗш гвардейски инçене вӗçекен авиаци полкӗ, **Глазков** полковникăн 3-мӗш гвардейски инçене вӗçекен авиаци полкӗ, **Зенков** подполковникăн 14-мӗш гвардейски инçене вӗçекен авиаци полкӗ, **Чеботаев** подполковникăн 455-мӗш инçене вӗçекен авиаци полкӗ, **Дмитриев** подполковникăн 13-мӗш гвардейски инçене вӗçекен авиаци полкӗ, **Матросов** подполковникăн 17-мӗш гвардейски инçене вӗçекен авиаци полкӗ, **Шапошников** подполковникăн 19-мӗш гвардейски инçене вӗçекен авиаци полкӗ.

Тунă çӗнтерӗве палăртса хăварас майпа **Смоленскпа Рославль** хулисене ирӗке кăларассишӗн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чăçсене **„Смоленски“** тата **„Рославльски“** ятсем парас.

Малашне вӗсене çапла чӗнмелле тăвас:

331-мӗш Хӗрлӗ ялавлă Смоленски стрелковăй дивизи,
215-мӗш Смоленски стрелковăй дивизи,
133-мӗш Смоленски стрелковăй дивизи,
222-мӗш Смоленски стрелковăй дивизи,
312-мӗш Смоленски стрелковăй дивизи,
199-мӗш Смоленски стрелковăй дивизи,
56-мӗш гвардейски Смоленски стрелковăй дивизи,
42-мӗш Смоленски стрелковăй дивизи,
153-мӗш Смоленски стрелковăй дивизи,
32-мӗш Смоленски кавалери дивизийӗ,
4-мӗш гвардейски Смоленски тупăллă артиллери дивизийӗ,
2-мӗш Смоленски штурмовой авиаци корпусӗ,
3-мӗш гвардейски Смоленски бомбардировочнăй авиаци дивизийӗ,
303-мӗш Смоленски истребительнăй авиаци дивизийӗ,
309-мӗш Смоленски истребительнăй авиаци дивизийӗ,
367-мӗш Смоленски уйрăм пулеметпа артиллери батальонӗ,
392-мӗш Красноярско-Смоленски корпусной артиллери батальонӗ,
644-мӗш Смоленски тупăллă артиллери полкӗ,
873-мӗш Смоленски истребительнăй противотанковăй артиллери полкӗ,
549-мӗш Смоленски минометнăй полк,
317-мӗш гвардейски Смоленски минометнăй полк,
201-мӗш Смоленски уйрăм гвардейски минометнăй дивизион,
35-мӗш Смоленски уйрăм гвардейски минометнăй дивизион,
49-мӗш Смоленски зенитнăй артиллери дивизийӗ,
341-мӗш Смоленски зенитнăй артиллери полкӗ,
1478-мӗш Смоленски зенитнăй артиллери полкӗ,
42-меш гвардейски Смоленски танковăй бригада
153-мӗш Смоленски танковăй бригада
4-мӗш гвардейски Смоленски танковăй бригада,
1-мӗш Смоленски штурмовой комсомольски инженернăй бригада,
1-мӗш гвардейски Смоленски истребительнăй противотанковăй артиллери бригади,
36-мӗш Смоленски инçене вӗçекен авиаци дивизийӗ,
2-мӗш гвардейски Смоленски инçене вӗçекен авиаци полкӗ,
3-мӗш гвардейски Смоленски инçене вӗçекен авиаци полкӗ,
14-мӗш гвардейски Смоленски инçене вӗçекен авиаци полкӗ,
455-мӗш Смоленски инçене вӗçекен авиаци полкӗ,
247-мӗш Рославльски стрельковăй дивизи,
139-мӗш Рославльски стрелковăй дивизи,
326-мӗш Рославльски стрелковăй дивизи,
49-мӗш Рославльски стрелковăй дивизи,
277-мӗш Рославльски стрелковăй дивизи,
344-мӗш Рославльски стрелковăй дивизи,
231-мӗш Рославльски штурмовой авиаци дивизийӗ,
564-мӗш Рославльски тупăллă артиллери полкӗ,
447-мӗш Хӗрлӗ ялавлă Рославльски тупăллă артиллери полкӗ,
542-мӗш Рославльски минометнăй полк,
992-мӗш Рославьлски истребительнăй противотанковăй артиллери полкӗ,
345-мӗш Рославльски инженернăй батальон,
303-мӗш Рославльски инженернăй батальон,
306-мӗш Рославльски инженернăй батальон,
1268-мӗш Рославльски зенитнăй артиллери полкӗ,
54-мӗш гвардейски Рославльски минометнăй полк,
2-мӗш Рославльски уйрăм гвардейски минометнăй дивизион,
13-мӗш гвардейски Рославльски инçене вӗçекен авиаци полкӗ,
17-мӗш гвардейски Рославльски инçене вӗçекен авиаци полкӗ,
19-мӗш гвардейски Рославльски инçене вӗçекен авиаци полкӗ,

Паян, сентябрӗн 25-мӗшӗнче, 21 сехетре пирӗн Тăван çӗршывăн столици—**Мускав Смоленскпа Рославль** хулисене ирӗке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене икçӗр çирӗм тăвата тупăран çирӗм хут пӗр харăс персе Тăван çӗршыв ячӗпе салют парать.

Питех те лайăх çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мӗнпур çарсене, **Смоленскпа Рославль** хулисемшӗн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, тав тăватăп.

Хамăр Тăван çӗршывăн ирӗклӗхӗпе никама пăхăнманлăхӗшӗн пыракан кӗрешӳре пуçӗсене хунă геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗç захватчикӗсене—вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1943 çулхи сентябрӗн 25-мӗшӗ.

М. И. Калинин Мексикăри пӗрлешӳллӗ штатсен президентне М. Авила Камачона янă телеграмма

Сентябрӗн 16-мӗшӗнче СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин Мексикăри пӗрлешӳллӗ штатсен президентне М. Авила Камачона Мексикăри пӗрлешӳллӗ штатсен никама пăхăнманлăх кунӗ ячӗпе саламласа çакăн пек телеграмма янă:

«Эпӗ Сире, господин президент, наци праздникӗ ячӗпе —Мексикăри пӗрлешӳллӗ штатсен никама пăхăнманлăх кунӗ ячӗпе—чунтан-чӗререн саламлатăп, çавăн пекех тата пирӗн пӗр тăшмана час çӗнтерме тата Мексикăри тăванла халăха чечекленсе ӳссе пыма сунатăп».

Президент М. Авила Камачо М. И. Калининăн саламлă телеграмми çине ответлесе янă телеграмма

Мексикăри пӗрлешӳллӗ штатсен президенчӗ М. Авила Камачо, СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗн М. И. Калининăн саламлă телеграмми çине ответлесе, çакăн пек телеграмма янă:

«Эсир мана Мексикăн наци праздникӗ ячӗпе янă саламшăн эпӗ Сирӗн превосходительствăна чунтан-чӗререн тав тăватăп тата хам енчен эпӗ вырăс халăхне тăшмана часрах çӗнтерме тата чечекленсе ӳссе пыма сунатăп».

Ялхуçалăх ӗçӗсене вӗçлемелли фронтовой уйăхлăх

Етӗрне районӗ государствăна тырă парса татрӗ

ВКП(б) Обкомӗн секретарьне ЧАРЫКОВ юлташа
Чăваш АССР Совнаркомӗн Председательне МАТВЕЕВ юлташа

Етӗрне районӗнчи колхозниксемпе колхозницăсем, хамăран паттăр Хӗрлӗ Çарăн мухтавлă çӗнтерӗвӗсемпе хавхаланса, Вăрнар районӗнчи колхозниксемпе колхозницăсем тыр пулсене ăнăçлăн пухса кӗртни çинчен, государствăна тырпул тата ытти ялхуçалăх продукчӗсем памалли çулталăкри плана срокчен тултарни çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишӗн социализмлă ăмăрту сарса яма чӗнсе калаНине хӗрӳллӗн йышăнса илчӗç. Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янине пула, пирӗн районри колхозсем сентябрӗн 24-мӗшӗнче государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçа кӗртрӗç.

Райсовет исполкомӗн председателӗ СПИРИДОНОВ.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ СОМОВ.

Хӗрлӗ Çарăн чаплă çӗнтерӗвӗсемпе хавасланса

(ВКП(б) Етӗрне райком секретарӗпе Сомов юлташпа калаçнинчен)

Пирӗн районри колхозсем ӗнер государствăна тырă памалли плана пурнăçа кӗртрӗç.

Государствăна тырă памалли плана районра чи малтан «Парижская» коммуна» колхоз (председателӗ Зыбин, парторганизаци секретарӗ Николаева) тултарчӗ, вăл 1944 çулшăн аванс шучӗпе 265 центнер тӗштырă пачӗ. Çавăн пекех «11 лет Октября» (председателӗ Горелкин) тата «Победа» (председателӗ Григорьев) колхозсем те хăйсен пӗрремӗш тивӗçне чыслăн пурнăça кӗртрӗç. Аванс шучӗпе «Комбайн» тата «Родина» колхозсем хатӗрлев пунктне вуншар центнер тырă леçсе пачӗç.

Эпир кăçал пур ӗçсене те государствăна тырă хăвăртрах парса татас енӗпе туса пытăмăр. Уяр çанталăкăн кашни сехечӗпе усă курса авăн çапрăмăр, итемсем çинче çӗрле те ӗçлессине организацилерӗмӗр. Чи малтан лайăх пулнă участоксенчи тырра çапса государствăна леçрӗмӗр. Тырпула комбайнпа пухса кӗртес ӗç çине уйрăмăнах çаврăнса пăхрăмăр. Районра комбайнсемпе пӗтӗмпе 1.111 гектар пухса илнӗ, планпа 600 гектар пухмалла пулнă. МТС-ри малта пыракан комбайнерсем Токсубаев тата Маскалан юлташсем уйрăмах лайăх ӗçлерӗç.

Эпир колхозсен председателӗсене государствăна тырă памалли пилӗккунлăх заданисене тӗрӗс пурнăçа кӗртсе пыма хушрăмăр. Çакна пула район сентябрӗн малтанхи кунӗсенчен пуçласах графикпа ӗçлесе пыма тытăнчӗ, колхозсем нумайӗшӗ пилӗккунлăх заданисене тултарса пычӗç.

Юлса пыракан колхозсене пулăшсах тăтăмăр. Вӗсене хатӗрлев пунктне тырă турттарма малта пыракан колхозсем пулăшу панă, предприятисемпе учрежденисем те транспорт парса пулăшнă. Юлашкинчен, Сăрă шывӗ тăрăх турттарас ӗçе те организацилерӗмӗр. Иваньково колхозӗ Сăрă шывӗ тăрăх хатӗрлев пунктне икӗ баржа тырă леçрӗ, вăл плана çак кунсенчех тултарать.

Хатӗрлев пункчӗн руководствине вăйлатас тӗлӗшпе те мерăсем йышăнтăмăр. Директор пулса ӗçлеме отечественнăй вăрçă инвалидне Волков юлташа лартрăмăр. Вăл ӗçе лайăх организацилениНе пула тырă йышăнас ӗçре чăрмавсем пулмарӗç.

Пирӗн задача—тырă памалли плана пур колхозсем тăрăх та çак кунсенчех тултарасси пулать. Фронтовой уйăхлăхра пирӗн çӗрулми кăларса государствăна парас, кӗрхи çӗртме тăвас, авăн çапса пӗтерес, выльăхсен фермисене хӗле хатӗрлес задачăсене те ăнăçлăн пурнăçламалла.

Сентябрӗн 26-мӗшӗнче ялсоветсемпе колхозсен председателӗсен, колхозсенчи партипе комсомол организацисен секретарӗсен слечӗ пулать. Слет фронтовой уйăхлăхра тăракан задачăсене пурнăçлас тӗлӗшпе тумалли конкретнăй мероприятисене сӳтсе-явать.

Уйăхлăхăн малтанхи кунӗнче

ИШЛЕЙ, сентябрӗн 25-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Паян районри пур колхозсем те, пӗтӗм уйхир ӗçсене вӗçлес тӗлӗшпе пуçланнă фронтовой уйăхлăха хутшăнса, государствăна тырă парас ӗçе хăвăртлатрӗç. «Автогигант», «Ыраш», Доронин тата Водопьянов ячӗсемпе тăракан колхозсем тырă парса татрӗç. Ку ӗçре кая юлса пыракан «Красный борец», «Новая сила», «Маяк» колхозсем те государствăна тырă пама васка пуçларӗç.

А. ТИМОФЕЕВА.

Уйăхлăха хутшăнса

КАНАШ, сентябрӗн 25-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Районри колхозсем, кăçалхи ялхуçалăх ӗçӗсене ăнăçлăн вӗçлес тӗлӗшпе пыракан фронтовой уйăхлăха хутшăнса, пур ӗçсене те пысăк хăвăртлăхпа тума тытăнчӗç. Ӗнер ВКП(б) райкомӗ колхозсене районри партипе совет активӗнчен 33 çын ячӗ. Вӗсем колхозниксемпе колхозницăсене фронтовой уйăхлăхăн задачисем çинчен ăнлантарса парса, колхозри ӗçсене йӗркелеме пулăшаççӗ. Фронтовой уйăхлăха хутшăнса. «Новая жизнь», «3-мӗш пятилетка». Буденный ячӗпе тăракан колхозсенче кунӗн-çӗрӗн авăн çапма тытăнчӗç. Вӗсем ку ӗçе çак кунсенчех вӗçлеме пулаççӗ. Колхозсенче кӗрхи çӗртме тăвас ӗç те нумай вăйланчӗ. «Красное пламя», «Идея Ленина», «Мотор» колхозсем паян кӗрхи çӗртме туса пӗтереççӗ.

Паянхи куна 48 колхозран 31-шӗ государствăна тырă парса татрӗç. Октябрӗн 1-мӗшӗччен пур колхозсем те государствăна тырă парса татаççӗ.

А. ДОЛГОВ.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Тырăпа сутă тума чарасси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарӗсен Совечӗ йышăннă обязательнăй постановлени

ССР Союзӗн Совнаркомӗ йышăннă постановлени тăрăх Чăваш АССР Халăх Комиссарӗсен Совечӗ **çапла йышăнать:**

1. Государствăна тырă памалли плана тултараччен колхозсене, колхозниксене, единоличниксен хуçалăхӗсене тӗштырă, çăнăх тата пиçнӗ çăкăр сутма е улăштарма чарас. Çакна çирӗплетсе калас: колхозсем, колхозниксемпе единоличниксен хуçалăхӗсем тырă сутма, государствăна тӗштырă памалли çирӗплетнӗ плана (ссудăсем тавăрса парасси, обязательнăй йӗркепе тырă парасси, Хӗрлӗ Çарăн тырă фондне хывасси, МТС ӗçленӗшӗн натуроплата тӳлесси) республика тăрăх пӗтӗмӗшпе пурнăçланă хыççăн, çавăн пекех колхозсем вăрлăх фончӗсемпе кирлӗ таран фураж фончӗсем хывнă хыççăн СССР Совнаркомӗ ирӗк парсан кăна пултараççӗ.

2. Çак постановление пăснăшăн айăплă колхоз председателӗсене тата ытти ӗçлӗ çынсене судпа айăпламалла тăвас. Тырăпа законсăр сутă тунăшăн айăплă колхозниксемпе единоличниксене малтанхи хут 300 тенкӗ таран штраф тӳлеттермелле, закона татах та пăссан вара судпа айăпламалла. Законсăр сутакан продуктсене тытса илсе Хатӗрлев Халăх Комиссариачӗн органӗсене памалла.

3. СССР Наркомзагӗн Чăваш республикинчи уполномоченнăйне Герасимов юлташа тата ӗççынни депутачӗсен райсовет исполкомӗсене çак постановлени мӗнле пурнăçа кӗрсе пынине сăнаса тӗрӗслесе тăма хушас.

Пасарсене контроллесе тăрассине милици органӗсем çине хурас.

Чăваш АССР Совнаркомӗн Председателӗ А. МАТВЕЕВ.
Чăваш АССР Совнаркомӗн ӗçӗсене тăвакан ӗшӗн З. МОКЕЕВА.

Шупашкар хули. 1943 çулхи сентябрӗн 25-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

КУБАНЬРЕ тата НОВОРОССИЙСКРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 4 километртан пуçласа 8 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Вăл шутра ЧЕКОН, ГОСТАГАЕВСКАЯ, ОЛЬХОВКА, БЛАГОВЕЩЕНСКОЕ ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

ДНЕПРОПЕТРОВСК енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 5 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 90 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Днепропетровск облаçĕнчи ЦАРИЧАНКА ятлă район центрне, Полтава облаçĕнчи КИШЕНЬКИ ятлă район центрне тата КРАСНОЕ, ХАНДЕЛЕЕВКА, КАКУРОВКА, КРАВЦОВКА, КИТАЙ-ГОРОД, 1-МĔШ МОГИЛЕВ, 2-МĔШ МОГИЛЕВ, НОВО-ПОДКРЯЖ, ПРЯДОВКА, ШЕВЧЕНКОВО, ПЕРВОЕ МАЯ, ТАРАСОВКА, СПАССКОЕ, ПОПОВА-БАЛОВКА ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

КРЕМЕНЧУГ хули енче пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, 10 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Полтава облаçĕнчи РЕШЕТИЛОВКА, НОВЫЕ СЕНЖАРЫ ятлă район центрĕсене, ТОЛСТАЯ, ТРОЙНИКИ, РОДИНОВКА, МОСТОВИВЩИНА, БАЛАКЛИЯ, ДЕМИДОВКА, МАЧУХИ, СТАРЫЕ СЕНЖАРЫ, ДМИТРЕНКИ, СУДОВКА, ЛЕЛЮХОВКА, БОЯРКА, БЕЛИКИ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата АБАЗОВКА, МАЛАЯ ПЕРЕЩЕПИНСКАЯ, НОВЫЕ СЕНЖАРЫ, ЛЕЩИНОВКА ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

КИЕВ енче пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, 10 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра БОРИСПОЛЬ хулине, Киев облаçĕнчи ВЫСШАЯ ДУБЕЧНЯ ятлă район центрне тата НИСШАЯ ДУБЕЧНЯ, ПУХОВКА, МАРТУСОВКА, ИВАНЬКОВО, ГЛУБОКОЕ, РОГОЗОВ, ЛЮБОРЦЫ, СОШНИКОВ, КОВАЛИН, ДМИТРОВКА, КРАПИВНА, ЧАПАЕВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

ГОМЕЛЬ енче пирĕн çарсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 10 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 160 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Орел облаçĕнчи КЛИМОВО ятлă район центрне, Чернигов облаçĕнчи ГОРОДНЯ тата ТУПИЧЕВ ятлă район центрĕсене ДЕГТЯРЕВКА, НИВНОЕ, ЛЯЛИЧИ, ГЛУХОВКА, ЛЫЩИЧИ, ПАВЛИЧИ, ХАЛЕВИЧИ, ДУШКИНО, МЕДВЕДЕВО, НИЖНЕЕ, КУРОЗНОВО, СЫТАЯ БУДА, СТАРЫЙ тата НОВЫЙ РОПСК, ГЕТМАНСКАЯ БУДА, КУРШАНОВИЧИ, ВИШНЕВКА, МОГИНИЩЕ, ХРЕНОВКА, МОЩЕНКА, ХРИПОВКА, БОЛЬШОЙ ЛИСТВЕН, ВЫХВОСТОВО, ЗВЕНИЧЕВ, ОСНЯКИ, ХМЕЛЬНИЦА, РУДКА, ШЕБЕРИНОВКА, ПЛЕХОВО ятлă пысăк пунктсене тата НОВО-РОПСК, КАМКА, ГОРОДНЯ ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

СМОЛЕНСК енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 4 километртан пуçласа 5 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра КОРЕЛЛЫ (Смоленскран 11 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре), ИЛЬИНА, ЛАВРОВА, МОКШЕЕВО, МИТЮШИНО, СЛОБОДА ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Пирĕн СМОЛЕНСКРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан çарсем уйрăм участоксенче 4 километртан пуçласа 5 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 20 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра МАЛАХИ, МАРЧЕНКИ, ВОЛОТЫ, МИХАЛКОВА, СОСЕНКА, ЗАХАРЬИНО, ЩИТНИКИ, ЗЫКОЛИНО ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Сентябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 49 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 38 самолетне персе ÿкернĕ.

Хĕрлĕ ялавлă артельте

КАНАШ, (Хамăр корр.). Совет Информаци Бюровĕ кашни кун Хĕрлĕ Çарăн çапла çĕнтерĕвĕсем çинчен пĕлтерет. Çак çĕнтерÿсем пире çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантараççĕ. «Авангард» промартель коллективĕ, июль уйăхĕнче çитĕнÿсем туса, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çакăн хыççăн артель коллективĕ тата та лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕ. Хĕрлĕ ялава хăйсен аллинчех тăрас тесе, хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем халĕ сентябрь уйăхĕн плана 150 процентран кая мар тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту аслă вăй илчĕ. Август уйăхĕнче артельте ĕçлекенсен 15 çын нормăна 300 процент, 23 çын 200 процент, 134 çын 150 процент таран тултарнă. Нормăна тултарман рабочисем пачах та пулман. Сентябрь уйăхĕнче [illegible] ытларах та ĕçре. Кузнецовăпа Чертков юлташсем ĕç нормине 300—320-шер процент, çĕнĕ çĕлекен цехре М. Балабанов, Н. Масленникова, М. Николаева, А. Байкалова юлташсем кашни кунах икшер норма тултараççĕ.

Рабочисем хушшинче массăллă-ăнлантару ĕçне аван йĕркеленĕ. Культ-[illegible] кашни кунах политинформаци ирттерет. Цехсенче стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ.

Артель коллективĕ çулталăкри плана октябрь праздникĕ тĕлне тултарма сăмах панă.

В. ВЕСЕЛОВ.

Учительсен хулари конференцийĕ

Сентябрĕн 24-мĕшĕнче Шупашкарти шкулсен 5—10-мĕш класĕсенче вĕрентекен учительсен конференцийĕ пулса иртрĕ. Унта икĕ ыйту: 1942—1943-мĕш вĕренÿ çулĕн итогĕсемпе çĕнĕ вĕренÿ çулĕн задачисем çинчен тата Шупашкарти шкулсен социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсемпе куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялава парасси çинчен сÿтсе-яврĕç.

Конференци ĕçĕсене ВКП(б) горкомĕн секретарĕ Романова, Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров, горисполком председателĕ Аникин, ВЛКСМ Обкомĕн шкулсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Токарев юлташсем хутшăнчĕç.

Хулари шкулсем иртнĕ вĕренÿ çулĕнче халăха çутта кăларас ĕçре чылай çитĕнÿсем тунă. 1-мĕш, 2-мĕш, 4-мĕш номерлĕ вăтам шкулсем ыттисенчен нумай лайăхрах ĕçленĕ.

Çакăнпа пĕрлех шкулсен ĕçĕнче çитменлĕхсем те пулнă. Шкулсем всеобуч законне хăшпĕр енĕпе пурнăçламан, хăшпĕр шкулсенче (5-мĕш, 6-мĕш шкулсенче) вĕренÿ пахалăхĕ çителĕксĕр пулнă. Уйрăмах вырăс чĕлхине начар вĕрентнĕ.

Çутĕç работникĕсем иртнĕ вĕренÿ çулĕнчи çитменлĕхсене шута илме тивĕçлĕ пек, анчах вĕсем кăçал та палăраççĕ. Хулара татах 30 ачана яхăн шкула çÿремеççĕ. Хĕрачасен 1-мĕшпе 2-мĕш номерлĕ, арçын ачасен 1-мĕшпе 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕсем кăна ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарнă. Чапаевскри, Сосновкăри шкулсем тата хĕрачасен 3-мĕш номерлĕ шкулĕ всеобуч законне пăсаççĕ. Ачасене тĕрĕс учета илсе тухман. Çавăнпа та ачасем шкул тулашĕнче нумай тăрса юлнă.

Конференцире Романова юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл кăçалхи вĕренÿ çулĕнче хĕрачасемпе арçын ачасем уйрăммăн вĕреннĕ май çĕнĕ ыйтусем, йывăрлăхсем пуласси çинчен, çав йывăрлăхсене çĕнтерес тесен учительсен мĕнле ĕçлемелли çинчен чарăнса тăчĕ.

Конференци шкулсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес, всеобуч законне чыслăн пурнăçлас, ачасене тарăн пĕлÿ тата çирĕп воспитани парас тĕлĕшпе конкретнăй мероприятисем палăртса решени йышăнса хăварчĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа горисполком председателĕ Аникин юлташ хулари шкулсен ăмăртăвĕн итогĕсем пирки чарăнса тăчĕ. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче хулари шкулсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. Ăмăртура 1-мĕш номерлĕ вăтам шкул лайăх результатсем кăтартрĕ.

Çак кунсенче ВКП(б) горкомĕпе горисполком Шупашкарти шкулсен социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухнă хыççăн, хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕ ăмăртура мала тухнине палăртнă. ВКП(б) горкомĕпе горисполкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулне пачĕç.

Хĕрлĕ ялава илнĕ ятпа шкул директорĕ В. Сергеева юлташ ответлă сăмах каларĕ. Вăл шкулăн ĕçне тивĕçлипе хакланăшăн пысăк тав турĕ, кăçал вĕренÿпе воспитани ĕçĕнче çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвассишĕн, всеобуч законне ăнăçлăн пурнăçлассишĕн, çамрăк ăрура тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн парăннă çулăмлă патриотсем вĕрентсе çитĕнтерессишĕн учительсен коллективĕ татах та ытларах вăй хурса кĕрешĕ тесе шантарса каларĕ.

Шкул ачисем кĕлте йăтаççĕ

Пĕррехинче занятисем пĕтнĕ хыççăн шкул директорĕ ачасене пухрĕ те:

— Ачасем, пирĕн колхозра молотилка патне кĕлте кÿрсе ĕлкĕреймеççĕ, çавăнпа та молотилка чарăна-чарăна тănипе колхозниксем тухăçлăн ĕçлеймеççĕ, эпир кайса пулăшар мар-и?—терĕ.

— Каятпăр, каятпăр!—пĕр çын пек хаваслăн ответлерĕç ачасем.

Леонтьев юлташ вĕсене йĕркелесе тăратрĕ. Пĕтĕмпе 110 çын. Вĕсем часах уя тухрĕç. Молотилка чăнах та чарăнса ларнă, ун патне кĕлтесем кÿрсе ĕлкĕреймеççĕ, ытти лашасем кĕрхи çĕртме тума кайнă. Колхоз председателĕ Ильин юлташ та ĕç вăйĕ çитменнишĕн шухăша кайнă.

Шкул ачисем кĕлтесем йăтма тытăнчĕç. Часах молотилка та ĕçлеме пуçларĕ. Икĕ сехет хушшинче çамрăксем 7 гектар çинчи тулă кĕлтисене молотилка патне йăтса пĕтерчĕç. Çав кун вара молитилка пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕ, пĕтĕмпе 13 гектар çинчи тырра çапса кĕртрĕç. Ачасем тăкăннă пучахсене те пухса пыраççĕ. Халĕ вĕсем кашни кун пекех колхоза çакăн пек пулăшаççĕ.

Ст. АСЛАН.

Шуркасси, Шăхасан районĕ.

Уйхир ĕçĕсене кăтартуллăн вĕçлеме пулчĕç

ОКТЯБРЬСКОЕ, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Çак кунсенче районри ялсовет тата колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ пĕтĕм уйхир ĕçĕсене вĕçлес тата вырăнсене хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе фронтовой уйăхлăх ирттересси çинчен йышăннă постановление сÿтсе-яврĕ.

Ялсовет тата колхоз председателĕсем, фронтовой уйăхлăхра пур ялхуçалăх ĕçĕсене те кăтартуллăн вĕçлеме пулса, хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç. Кутемерти «Коммунист», «Венера», «Молния», «Заря» колхозсен председателĕсем авăн çапас ĕçе çак кунсенчех вĕçлеме пулчĕç.

Паянхи куна районра 25 колхоз государствăна тырă парса татнă. «Красный Октябрь», «Ударник» колхозсем государствăна паян тырă парса татрĕç.

«Венера», «Молния» колхозсем, çĕрулми кăларса пĕтерсе, государствăна та парса татрĕç.

Г. АЛЕКСЕЕВ,

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Чăваш театрĕн çуллахи ĕçĕсем

Чăвашсен государство академиллĕ театрĕ июнĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 10-мĕшĕнчен республикăри колхозсенче гастрольпе пулчĕ. Виçĕ уйăх хушшинче театр пурĕ 17 районра пулчĕ.

Театрăн ку чи пысăк гастролĕ, [illegible] пек пысăк гастрольсем аллинчен пулман тесен те юрать. Çапла та коллектив ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕ. Виçĕ уйăх хушшинче çанталăк темĕле начар пулнă пулсан та, артистсем çумăра, пылчăка пăхмасăр, пĕр колхозран тепĕр колхоза [illegible] кунран пуçласа юлашки кунччченех çуран çÿрерĕç.

Коллектив икĕ бригадăна уйăрăлса, ĕç планне вăхăтра пурнăçлас, колхозниксене художествăллă паха спектакльсем кăтартас тесе ăмăртса ĕçлерĕ. Çапла вара план тăрăх 150 спектакль лартмалла пулнă пулсан, коллектив 198 спектакль лартрĕ. Кунсăр пуçне нимĕçсен аллинчен хăтăлнă театрсене пулăшма, артистсем каммалли кун икĕ спектакль лартса пачĕç.

Театрăн спектаклĕсене 100 пин çын ытла пăхнă. Спектакльсене, хăшпĕр колхозсенче клуб çук е клубсем пĕчĕккĕ пирки, урамра, сарайсенче, картишсенче лартнă. Нумай чухне артистсем сценăсене те хăйсемех тунă. Театр пырсан кашни колхозрах пысăк уяв пулать, колхозниксем йывăр ĕç хыççăн, тумланса, театра канма пухăнаççĕ. Урамра выляна чухне куракансем пин е пин те пилĕкçĕр çын йĕркеллĕн карталанса лараççĕ.

Артистсене пур çĕрте те хапăл туса йышăнаççĕ. Пуринчен ытла чăваш искусствин тава тивĕçлĕ деятелĕ Н. С. Айзман çырнă «Лиза Короткова» драмăна юратса, пысăк хавасланса пăхаççĕ. «Пире колхозниксене тата вăйлăрах та ывăнма пĕлмесĕр, [illegible] ĕçлеме вĕрентет ку спектакль» теççĕ колхозниксем.

Спектакль хыççăн колхозниксем артистсене [illegible] спектакль пирки, колхозсенче çитменлĕхсем пирки [illegible] сÿтсе-яваççĕ [illegible] пасара [illegible] унтах пьесăри геройсен ячĕпе (сăмахран Якраççи) чĕнме пуçлаççĕ. Артистсене тав тăваççĕ.

Театр хăй 25 çул тултарнă куна уявланă чухне общественность колхозри калама çук пысăк та, йывăр ĕçсене тăвакан хĕрарăмсен сăн-сăпатне кăтартакан пьесăсемпе спектакльсем çуккине астутарчĕ. Кун хыççăн драматург Н. С. Айзман тата театр пысăк хаваслăхпа ĕçлесе «Лиза Короткова» спектакль хатĕрлерĕ.

Спектакль, вăрçă вăхăтĕнче арçынсем фронта кайсан, вĕсен вырăнне хĕрарăмсем тăрса вăйлăн ĕçленине кăтартать.

Лиза Короткова— çамрăк хĕр, качча тухсан, упăшкипе—Платонпа пĕр кун та пурăнса ĕлкĕреймест. Платон фронта тухса каять. Лиза упăшки вырăнне колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Ĕç йывăр, лашасем çитмеççĕ, çынсем сахал... Лиза, халиччен ун пек йăвăр ĕçре пулманскер, вăхăчĕпе йĕрет те. Колхоз ĕçне чăрмантаракансем те пур. Лиза, колхозниксем тата райком пулăшнипе, ĕçлеме вĕренет, ĕçе йĕркеллĕ ертсе пырса, йывăрлăхсене çĕнтерсе, колхоза мала кăларать. Танксем, самолетсем тунă çĕре нумай укça пухса, Сталин юлташран тав туса çырнă телеграмма илет.

Спектакле пуринчен ытла хĕрарăмсем пăхаççĕ. Лизăна — колхозра председатель пулса ĕçлекен Нарспи теççĕ, ăна питĕ килĕштерсе унпа пĕрле савăнаççĕ, ăна чăрмантаракансене чышкă чăмăртаса, çиленсе, курайми пулса лараççĕ. Спектакль хыççăн колхозницăсемпе колхозниксем ĕçе «Лиза Короткова» драмăри пек лайăх йĕркелемелле тесе калаççĕ. Колхоз председателĕсем, бригадирсем—Лиза пек пулма, колхозниксем—Спиридон пек пулма ĕмĕтленеççĕ. Колхоз председателĕсем, бригадирсем тепĕр кунех колхозниксемпе Лиза пек калаçма тăрăшаççĕ. Колхозниксем артистсене татах та килме ыйтаççĕ. Вĕсем: «сирĕн спектакль пире хамăрăн çитменлĕхсене курма тата ĕçлеме вĕрентет, сирĕн спектакль хыççăн татах та тăрăшарах ĕçлес килет, фронта вăйлăнрах пулăшса, Гитлера часрах пĕтерсе, Лизăпа Платон пĕрле ĕçленине курас килет», теççĕ.

Колхозниксем уйрăмăнах Чăваш республикин халăх артистне Б. А. Алексеев юлташа, Чăваш республикин тава тивĕçлĕ артисчĕсене И. В. Молодов, А. К. Ургалкин, Л. Ф. Семенов, Т. Н. Петрова, О. П. Ырзем юлташсене, Фадеев, Долгова, Шорникова, Васильева артистсене килĕштереççĕ.

Театр «Лиза Короткова» драмăсăр пуçне, Финн çырнă «Сутăлас çемье», Петров çырнă «Урнă йытă», Сухолодский çырнă «Развĕдкăра», Сен[illegible] çырнă «Меллĕ этем» ятлă пĕр актлă, фашизма хирĕçле драмăсемпе комедисем лартрĕ. Пĕр актлă пьесăсене те куракансем килĕштерсе пăхаççĕ. Уборка вăхăтĕнче ку пьесăсене хире, ĕçленĕ çĕре, тухса та вылянă.

Спектакльсем кăтартнисĕр пуçне артистсем колхозсенче стена хаçачĕсем, боевой листоксем кăларма пулăшнă, художествăллă пултарулăх кружокĕсене пулăшусем панă. Спектакль пуçланас умĕн оперативнăй сводкăсене, партипе правительство решенийĕсене, Сталин юлташăн приказĕсене ăнлантарса парас тĕлĕшпе калаçусем ирттернĕ. Чăваш халăхĕ фронта чăваш боецĕсем патне çырнă çырăва вуласа ăнлантарса панă.

Колхозниксем спектакльсене юратаççĕ. Вĕсен культури ÿсни курăнать, çавăнпа та вĕсем çитес гастрольсен репертуарне, хальхи пурнăçа кăтартакан пьесăсемсĕр пуçне, классиксем çырнă пьесăсене кÿртме ыйтаççĕ.

Театр колхозниксен кăмăлне килĕштерсе çитес гастрольсенче классиксем (Горький, Островский, Мольер, Гольдони) çырнă пьесăсене кĕртме шухăшлать.

Çуллахи гасторльсем пĕтрĕç. Артистсем халĕ театрăн тĕп сцени çинче ĕçлеме пуçлаççĕ. Театр 1943 çул пĕтиччен тата 3 çĕнĕ спектакль: Островскин «Лес», Кацпа Ржешевскин «Олеко Дундич» пьесисене тата чăваш драматургĕн Мранькан çĕнĕ пьесине лартма хатĕрленет.

Çитес çулла гастроле тухса кайма халех хатĕрленме пуçлатпăр, театр çĕнĕ репертуарпа тухса кайма ĕмĕтленет.

Л. РОДИОНОВ,

Чăвашсен Государство Академиллĕ театрĕн художественнăй ĕçсен руководителĕ.

Америка самолечĕсем Камчаткăна ирĕксĕр анса ларни

ХАБАРОВСК, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 12-мĕшĕнче, моторсем юсавлă пулман пирки, Камчатка территорийĕ çине Америкăн 3 самолечĕ анса ларнă. Çав кунах, кăшт вăхăт иртсен, Камчатка тĕлĕнче Америкăн татах 4 самолечĕ курăнса кайнă. Кусене те ирĕксĕрех совет территорийĕ çине анса ларма тивнĕ. Тĕнчери çĕршывсем хушшинчи правилăсене пăхăнса, совет влаçĕсем Америка самолечĕсене вĕсен командирĕсемпе пĕрлех тытса чарнă.

Беляев генерал калани

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Вашингтонра Америкăри вăрçă заемĕ ячĕпе уçăлнă выставкăра Совет Союзĕн тавар илекен мисси пуçлăхĕ Беляев генерал çапла каланă:

«Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин хушнипе, мана çакна пĕлтерме телей килсе тухрĕ:

«Совет Союзĕ 26 уйăх хушши ĕнтĕ пирĕн пуриншĕн пĕр тăшмана хирĕç—гитлерла Германие тата унăн союзникĕсене — Финляндие, Румынию, Венгрие хирĕç ирĕклĕхшĕн пыракан йывăр вăрçă вăрçать. Çак вăрçăра, икĕ енĕпе шутласан, 500 дивизи ытла çапăçать. Паян Совет Союзĕн çарĕ, Хĕрлĕ Çар, Смоленскран пуçласа Хура тинĕс çыранĕсем патне çитиччен фронтра ылханлă тăшмана совет çĕрĕ çинчен хăвалать. Çак вăрçăра Хĕрлĕ Çар союзникĕсенчен — США-па Великобританирен илсе тăракан самолетсемпе, танксемпе, тупăсемпе тата ытти çар хатĕрĕсемпе те ăнăçлăн усă курать.

Çĕнтерÿ сехетне сывхартас тесе, пĕтĕм совет халăхĕ фронт валли ырми-канми ĕçлет. Совет çарĕ валли çар хатĕрĕсем тата çимĕç тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен пирĕн Америкăри туссем тăшманпа кĕрешнĕ çĕрте совет халăхне пысăк пулăшу параççĕ.

Совет Союзĕн кашни гражданинĕ хăйĕн çарне тата хăйĕн правительствине ылханлă тăшмана çапса çĕмĕрме хăйĕн ĕçĕпе çеç мар, тата вăрçă заемĕн облигацийĕсене илнипе те пулăшать. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем кăларнă заема ăнăçлăн сарса, Америка граждансем Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар хăватне ÿстерме тата союзниксен пĕрлешÿллĕ вăйĕсене тăшмана хăвăртрах çапса аркатма пулăшчăр»..

ИТАЛИ ВОЙСКИСЕМ РИМ РАЙОНĔНЧЕ ТАТА ИТАЛИН ÇУРÇĔР ПАЙĔНЧЕ НИМĔÇСЕМПЕ ÇАПĂÇАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Бернри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, итальянец салтакĕсен пысăк ушкăнĕсем Рим районĕнче нимĕçсемпе хаяррăн çапăçаççĕ. Юлашки тăватă кун хушшинче вĕсем Германин мотомеханизированнăй чаçĕсемпе çапăçса çиеле тухнă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Мадридри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, итальянецсем Италипе Франци хушшинчи чикĕри нимĕçсемпе çапăçаççĕ.

ЖИРО ГЕНЕРАЛ КОРСИКА УТРАВĔ ÇИНЕ ПЫНĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Алжирти радио каланă тăрăх çапла пĕлтерет: Жиро генерал сентябрĕн 21-мĕшĕнче Корсика утравĕ çине пынă.

ФРАНЦИ ПАТРИОЧĔСЕН КĔРЕШĔВĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Алье департаментĕнче Германие кайма килĕшмен французсен хĕçпăшаллă ушкăнĕсем кĕрешеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ вăрмансенче пытанса пурăнаççĕ. Партизансем хресченсемпе çыхăну тытса, вĕсене ялхуçалăх ĕçĕсене тума пулăшаççĕ, çакăншăн хресченсем вĕсене апат-çимĕç парса тăраççĕ.

Франције оккупациленĕ влаçсем Францин нумай районĕсенче Виши çарĕсен офицерĕсене йышлăн арестлеççĕ. Арестленисем хушшинче пысăк офицерсем, кадровăй вăтă офицерсем тата унтер-офицерсем нумай. Çав вăхăтрах Петэн «легионĕнчи» паллăрах членсене те арестленĕ. Арестленисене пурне те нимĕç оккупанчĕсене хирĕç тăракан çынсем пуль тесе шутлаççĕ.

ЮГОСЛАВИ ПАРТИЗАНĔСЕН ĔÇĔСЕМ АНАÇНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Югослави партизанĕсем Далмаци çыранĕ çывăхĕнчи темиçе утрава йышăнса илнĕ, вăл шутра Раб тата Корчула утравĕсене, çавăн пекех тата Пелешац çурутравне тытса илнĕ. Далмаци çыранĕ пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех партизансен аллинче.

Раб утравĕ çинче политика тĕлĕшпе айăпласа хупнă 5 пин çынна яхăн ирĕке кăларнă, вĕсем вара çавăнтах партизансем енне куçнă.

Партизансем Белградпа Загреб хушшинчи чугун çулăн тĕп линине тата Венăна Будапештпа, Белградпа, Софипе тата Салоникипе çыхăнтарса тăракан магистрале татнă.

Черногорин пĕтĕм çыранĕ тăрăх партизансемпе нимĕçсем хушшинче хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Югославипе Албани партизанĕсем Дураццоран 70 километрта ларакан чи паха Леш порчĕ патне çывхарнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Мангейм-Людвигсхафена хаяррăн тапăннă. Çавăн пекех Дармштадтпа Аахена та тапăннă. Америкăпа Англи бомбардировщикĕсем сентябрĕн 23-мĕшĕнче кăçпа Францири, Бельгири тата Голландири объектсене тапăннă.

ТУРЦИ ЖУРНАЛИСЧĔ ГИТЛЕРЛА ПРОПАГАНДА СУЙНИНЧЕН ТĂРĂХЛАТЬ

СТАМБУЛ, сентябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Турци журналисчĕ Джахид Ялчин «Хабер» ятлă хаçатра пичетленнĕ статьинче гитлерла пропаганда Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра Германи çарĕсем поражени тÿснине мĕнле те пулсан ăнлантарса пама хăтланни çинчен тăрăхласа кулать.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра нимĕçсен лару-тăрăвĕ,—тесе çырать автор,—çав тери начарланса çитрĕ. Çак лару-тăрăва нумай пулмасть шухăшласа тупнă «ансат улшăнакан тактика» тата «куçса çÿрекен оборона» тенĕ сăмахсем те пытарса хăвараймаççĕ. Нимĕçсем питĕ пысăк поражени тÿсеççĕ. Çĕнтерес тесе тапăннă çĕршыв ран халь вĕсем каялла чакаççĕ. Нимĕçсем каялла чакнине пĕтĕм тĕнчери халăхсен чĕлхипе поражени теççĕ. Çакна ĕнтĕ халь пытарма та, хирĕçлеме те май килмест. Германишĕн питĕ хăрушă хĕл çывăхарса килет. Ку хĕл нимĕçсем валли асап, инкексем, шанчăксăрлăх илсе килет. Пĕтĕм тĕнче çак çитес хĕл чи хаяр хĕл пултăрччĕ тесе кĕтет.

Пĕлтерÿ

Сентябрĕн 27-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренекен кружоксен руководителĕсен семинарĕ пулать. Семинар теми: **«Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн 1942 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче панă 55-мĕш номерлĕ приказĕ».**

Семинара старши лейтенант Мошнин юлташ ирттерет.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ÇУЛЙĔР ИНСТИТУЧĔСЕМПЕ ТЕХНИКУМĔСЕМ

пĕрремĕш курса вĕренме халĕ те илеççĕ.

Çулйĕр институтне 10-мĕш класран вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекенсене, çулйĕр техникумĕсене 7-мĕш класран вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекенсене илеççĕ.

Çулйĕр институчĕсем çак хуласенче пур: Саратовра, Омскра, Мускавра. Çулйĕр техникумĕсем — Свердловскра, Дон çинчи Ростовра, Мускавра.

Вĕренме кĕмелли условисем çинчен тĕплĕн çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чебоксары, ул. Калинина, 51, Отдел кадров Управления строительства ГШО НКВД СССР.

СТЕНОГРАФИ ĕçне тата машинăпа çырма вĕрентекен курс 1943—44-мĕш çулта вĕренме çынсем илесси çинчен пĕлтерет.

Мĕн пурĕ 10 уйăх вĕренмелле.

Вĕренме çитес октябрь уйăхĕн 10-мĕшĕнче пуçлаççĕ.

Çак адреспе ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Новая, 22.

Мускаври 2-мĕш №-лĕ Витамин заводĕн заготконтори Чăваш республикинчи район центрĕсенче шăлан çырли йышăнать, чĕрĕлле те, типĕтнине те илет. Шăлан çырли пухса паракансене тăвар, эрех, премĕк-канфет, супăнь тата ытти таварсем те параççĕ.

Шупашкар хулинче шăлан çырлине кашни кунах йышăнаççĕ. Çак адреспа пырса памалла: Заводская, 43. Телефон 6—84.

2—1.

Çыхăну Халăх Комиссариачĕн Чăваш управленине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: административнăй тата хуçалăх ушкăнĕн начальникĕ, транспорт инспекторĕ, икĕ экономист, машинистка.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом Связи, 3 этаж, комната 11, отдел кадров.

Комсомольски райдоротделăн СУХАТНА ÇАВРАКА ПИЧЕТНĔ тĕрĕс мар тесе шутламалла.

2—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—87, редакци секретарĕн—4—28, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленносăпа ялхуçалăх пайĕн—3—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 378 Типографи №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.